17-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 февраль 17 шăматкун 31(6782) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Кашни ял Советĕнчех вулав çурчĕ пултăр

Хурал пÿрчĕ мĕн иккенне хальхи çамрăк колхозниксемпе колхозницăсем пĕлмеççĕ. Вăл çурт ĕлĕк ял вĕçнерехре, пушăрах вырăнта, ытти çуртсенчен уйрăмрах çĕрте ларнă. Вăл çуртра тĕттĕм те тĕтĕм кăна пулнă, çапла вара вăл тĕттĕм саманан сăнарĕ пулса тăнă. Куланай пухмалла пулсан е халăхран мĕн те пулин урăххине шăйăрса илмелле пулсан, улпутсемпе патша тарçисем яла пынă та халăха çав çурт патне пухтарнă. Унта вара хăшне сурса ятланă, хăшне асаплантарнă. Çав çурта çынсем «хурал пÿрчĕ» тенĕ. Хурал пÿртне халăх пĕр-пĕринпе калаçма, çĕнĕ хыпарсем илтсе пĕлме е мĕнле те пулин ăслă сăмах илтме мар, пуянсен тата патша йыттисен мăшкăлне илтме пухăннă. Çак çурт вара ĕлĕк ялти пĕртен-пĕр «культура çурчĕ» пулнă.

Патша саманипе пĕрле хурал пÿрчĕсем те авалăха тăрса юлчĕç. Ялсенче шкулсем, политикăллă çутĕç учрежденийĕсем шăтса ÿсрĕç. Ялти халăх çутталла туртăнчĕ. Совет влаçĕ ялти ĕççыннисене пуян та культурăллă пурнăçпа пурăнма çул уçса пачĕ. Çырма-вулама пĕлмен, радио илтмен, çĕршывăн культурăллă пурнăçĕн тулашĕнче тăракан çынсем халĕ ĕнтĕ ялта çукпа пĕрех.

Халĕ колхозниксем, ĕçрен пушă вăхăтсенче ялти вулав çуртне, колхоз клубне е шкула пухăнса, кĕнекесемпе хаçат-журналсем вулаççĕ, радио итлеççĕ, — хăйсене интереслентерекен ĕçсемпе событисем çинчен ыйтса пĕлеççĕ. Вĕсем хăйсен пурнăçĕпе кăна мар, пĕтĕм çĕршыв пурнăçĕпе пурăнма тăрăшаççĕ, вĕсене пĕтĕм тĕнче пурнăçĕ интереслентерет.

Ялти халăх хушшинче социализмлă культура хĕмне сапса тăракан вучахсем вĕсем, чи малтан, ялти политикăллă çутĕç учрежденийĕсем, шкулсем, клубсем, вулав çурчĕсем, Культура çурчĕсем пулса тăраççĕ. Чăваш республикинче кăна кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 611 вулав çурчĕ, колхозсенче 208 клуб, Социализмлă культура çурчĕсем 26 шутланнă. Кунсăр пуçне ялсенче 61 библиотека, район центрĕсенче 28 библиотека ĕçлеççĕ.

Пирĕн партипе правительство ялăн культурине çĕклес, ялти политикăллă çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе куллен тăрăшаççĕ. 1944 çулхи июлĕн 14-мĕшĕнче ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Чăваш республикинчи культурăпа çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕ çинчен» ятарласа постановлени йышăнчĕ. Çак постановлени республикăри политикăллă çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕн программи пулса тăчĕ. Вăл постановление йышăннăранпа республикăри вулав çурчĕсемпе клубсем, театрсемпе библиотекăсем тата ытти çутĕç учрежденийĕсем хăйсен ĕçне чылай лайăхлатрĕç.

Политикăллă çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатас майпа иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнче, ВКП(б) Обкомĕ йышăннă тăрăх, клубсемпе вулав çурчĕсен ĕçне массăллăн тĕрĕслесе иртнĕ. Çак тĕрĕслÿ вăхăтĕнче 55 вулав çуртне, колхозсенчи 26 клуба, ялти 2 библиотекăна юсаса йĕркеленĕ, вулав çурчĕсем валли 37 çурт суйласа илнĕ, 2.027 кубометр вутă хатĕрлесе 1.242 кубометр турттарса тухнă, 11.000 тенкĕлĕх çĕнĕрен литература туяннă, вулав çурчĕсемпе клубсенче ĕçлеме пултаруллă çынсене уйăрса лартнă.

ВКП(б) райкомĕсемпе райсовет исполкомĕсем куллен те тĕплĕн ертсе пынă çĕрте ялсенчи вулав çурчĕсемпе клубсем чăн-чăн культура центрĕсем пулса тăраççĕ. Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче Вăрмар районĕнчи комсомолецсем политикăллă çутĕç учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе вунăкунлăх ирттернĕ. Чулкасри «Свобода» колхозра вулав çурчĕн пÿртне правлени йышăннă пулнă. Комсомолецсем ыйтнипе вăл çурта пушатнă та, комсомолецсем унăн стенисене шуратнă, лозунгсем, плакатсем çакнă, партипе правительство çулпуçĕсен портречĕсене çаксa илемлетнĕ, харпăрхăй килĕнчен сĕтел-пукансем илсе пырса лартнă, хĕл каçмалăх вутă турттарса хатĕрленĕ. Çапла вара вулав çурчĕ колхозниксем пухăнакан юратнă вырăн пулса тăнă.

Республикăра лайăх ĕçлекен вулав çурчĕсемпе клубсем сахал мар. Шăхасан районĕнчи Уйкас Кипекри вулав çурчĕ таса та илемлĕ. Чÿречесем çинче чечексем лараççĕ. Стенисене çĕнĕ плакатсемпе лозунгсем илем кÿреççĕ. Кунта стена хаçачĕ те тăтăшах тухса тăрать. Колхозниксем кашни кунах Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе паллашаççĕ, хаçат-журнал вуласа панине итлеççĕ. Каçсерен вулав çуртĕнче çамрăксемпе ватă колхозниксем нумай пухăнаççĕ. Кунта драма, хор кружокĕсем, агротехника кружокĕ, Сталин юлташ «Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен» тунă доклада вĕренмелли кружок ĕçлеççĕ. Çавăн пекех Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозăн клубĕ те кăтартуллăн ĕçлет. Кунта, ытти ĕçсемсĕр пуçне, ялхуçалăх выставки организациленĕ, колхоз çулран çул мĕнле тĕрекленсе пынине илемлĕ диаграммăсемпе кăтартса панă.

Анчах вулав çурчĕсемпе клубсем пурте çакăн пек лайăх ĕçлеççĕ теме пултараймастпăр. Хупăнса ларакан е начар ĕçлекен клубсемпе вулав çурчĕсем те чылай-ха. Советски районра 21 вулав çуртĕнчен 7 çурчĕн хăйсен уйрăм çурт е пÿлĕм çук. Республикăри сахал мар вулав çурчĕсем вĕсен заведующийĕсем çук пирки ĕçлемесĕр лараççĕ, хăшпĕрисем хутма вутă çук пирки ĕçлеймеççĕ. Тĕслĕхрен илсен, Чкаловски районри Çĕнĕ Ахпÿртри вулав çурчĕ, нумаях та пулмасть кăтартуллăн ĕçлекенскер, халĕ пачах та ĕçлемест: унăн çуртне хутмаççĕ, çутма краççын çук.

Ялти социализмлă культура учрежденийĕсен ĕçне пĕр минутлăха та начарлатмалла мар. Ялти халăх кашни кун пулса иртекен политикăллă ĕçсемпе кăна мар, наукăри çĕнĕ хыпарсемпе те, илемлĕ литературăпа та, кинопа та, искусствăпа та хĕрÿллĕн интересленет. Вулав çурчĕсемпе клубсем тата Культура çурчĕсем колхозниксемпе колхозницăсен çак интересне тивĕçтерсе пыма тивĕçлĕ. РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ нумаях та пулмасть йышăннă хăйĕн постановленийĕнче çакăн пек задача лартрĕ: 1945 çул тăршшĕнче РСФСР-ти пур ялсовечĕсенче те вулав çурчĕсем, районсенче пуринче те культура çурчĕсем пулмалла.

Паллах ĕнтĕ, çак питех те кирлĕ задачăна пурнăçа кĕртес тесен, чи малтан, халиччен пулнă политикăллă çутĕç учрежденийĕсене пурне те ĕçе ямалла, çавăнпа пĕрлех çĕнĕ вулав çурчĕсемпе клубсем уçма та майсем тупмалла. Анчах вулав çурчĕпе клуба уçасси вăл йывăр ĕçех мар-ха, чи кирли — вĕсен ĕçне йĕркелесе ярасси тата ертсе пырасси пулать. Вулав çурчĕсенче наукăпа çутĕç пропагандине организацилесси çине уйрăмăнах çавăрăнса пăхмалла. Вулав çурчĕсемпе клубсенче ĕçлеме пултаруллă çынсене уйăрса лартмалла.

Ялти политикăллă çутĕç учрежденийĕсен ĕçĕпе вырăнти пичетĕн куллен интересленмелле, вĕсен лайăх ĕçĕпе çитменлĕхĕсене хаçатсен страницисенче тăтăшах çутатса пымалла. Районсенчи чылай хаçатсем çакна асра тытмаççĕ. Вăрнар районĕнчи «Социализм çулĕпе» хаçат юлашки 3—4 уйăх хушшинче вулав çурчĕсен ĕçĕ çинчен пĕр-ик пĕчĕк заметка çырнипех лăпланса ларнă.

ВКП(б) райкомĕсен пропагандăпа агитаци отделĕсем тата районсенчи çутĕç пайĕсем вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсен тата культура çурчĕсен ĕçне лайăхлатассишĕн куллен тăрăшма тивĕçлĕ.

Халĕ, çуракине хатĕрленмелли хĕрÿллĕ вăхăтра, клубсемпе вулав çурчĕсем политикăллă-массăллă ĕçĕн центрĕсем пулса тăмалла. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене вĕсен умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртме, фронта пулăшас ĕçе вăйлатма мобилизацилемелле.

США Президенчĕ Рузвельт господин СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталина патне янă çыру

Тараватлă Совет Союзĕнчен тухса каяс умĕн эпĕ Сире хам Сирĕн патăрта Крымра хăнара пулнă чухне Эсир мана çав тери лайăх пăхнăшăн чĕререн тав туни çинчен тепĕр хут каласа парасшăн. Эсир, Премьер-Министр тата хам пулнă канашлăвăн результачĕпе эпĕ тулли кăмăллă пулса тухса каятăп. Тĕнчери халăхсем, эпĕ çакна çирĕп шанса тăратăп, çав канашлури çитĕнÿсене ырлĕç, çав çитĕнÿсем пирĕн виçĕ аслă нацие мир вăхăтĕнче те вăрçă вăхăтĕнчи пекех лайăх килĕштерсе ĕçлеме чăн-чăн шанчăклă май туса параççĕ, тесе хаклĕç.

Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Иден господин СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патне янă çыру

Россиăран тухса каяс умĕн эпĕ Крымри конференци вăхăтĕнче пире пурне те хăналаса ырă кăмăлпа йышăннăшăн Сире пĕтĕм чĕререн тав тăвасшăн.

Сирĕнпе пĕрле ĕçленипе эпĕ, яланхи пекех, питĕ кăмăллă пултăм. Пирĕн калаçусен результачĕ мана Совет Социализмлă Республикăсен Союзĕ, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем тата Пĕрлешÿллĕ Королевство мирлĕ тапхăрта та вăрçă вăхăтĕнчи пекех пĕрлешсе ĕçлесе пырассине çирĕппĕн шанса тăма май парать. Çавăн пек пĕрлешсе ĕçлени кирлине тата этемлĕхĕн пулас телейĕшĕн çавăн пек пĕрлешсе ĕçлени питĕ паха пулнине эпĕ ниçсанхинчен те ытларах ĕненетĕп.

1945 çулхи февралĕн 14-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 15-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем ХĔВЕЛТУХĂÇ ПРУССИРЕ, КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăртарахра, малалла талăнса пынă, РОЗИТТЕН, КУМКАЙМ, ГРОСС КЛАУЗИТЕН, ЛИБЕНТАЛЬ, ЛИХТЕНАУ, ЛОТТЕРФЕЛЬД, ЗОНВАЛЬДЕ, ХАЙНРИКАУ ялĕсене туртса илнĕ.

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, малалла наступлени туса пырса, февралĕн 15-мĕшĕнче ХОЙНИЦЕ (КОНИТЦ) хулипе ТУХОЛЯ (ТУХЕЛЬ) хулине — çулйĕрсен пысăк узелĕсене тата нимĕçсен Хĕвеланăç Польшăри оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене — çапăçса туртса илнĕ.

ПОЗНАНЬ хулинче хупăрласа илнĕ нимĕç гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Февралĕн 15-мĕшĕ вĕçленсе çитнĕ тĕлелле пирĕн çарсем хулан пысăк пайне, ВАРТА шывĕн хĕвеланăç хĕррине лараканнине, тăшмантан тасатса пĕтернĕ. Çав вăхăталла нимĕçсен гарнизонĕн аллинче ВАРТА шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи ЦИТАДЕЛЬ районĕ тата ВАРТА шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче хулапа пĕрлешсе ларнă 4 ял кăна тăрса юлнă.

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, наступление малалла вăйлатса пырса, февралĕн 15-мĕшĕнче нимĕç СИЛЕЗИЙĔНЧЕ ГРЮНБЕРГ хулине тата БРАНДЕНБУРГ провинцийĕнчи ЗОММЕРФЕЛЬД хулипе ЗОРАУ хулине — çулйĕрсен паха узелĕсене тата нимĕçсен оборонин хăватлă тĕреклетнĕ пункчĕсене — туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЭЙХВАЛЬДАУ, ШВАЙНИТЦ, НАУМБУРГ, ГАССЕН, БЕНАУ, ВЕЛЛЕРДОРФ, ТШИБСДОРФ ятлă пысăк ялсем. Февралĕн 14-мĕшĕнче фронт çарĕсем ку районра 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ тата аэродромсенче тăшманăн 120 самолетне тытса илнĕ.

БУДАПЕШТ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăç енерехре пирĕн çарсем тăшманăн БУДАПЕШТ хулин хĕвеланăç пайĕнчен тухса тарса вăрмансенче пытаннă уйрăм ушкăнĕсене пĕтерсе пынă. Февралĕн 14-мĕшĕнче пирĕн çарсем ку районра тăшманăн 6.650 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисен шутĕнче БУДАПЕШТ группировкин штурмовой артиллерийĕн командующийĕ БЕЛЬНИЦЕР генерал-лейтенант, ИМРЕ КАЛАНДРИ генерал-лейтенант тата ЛЕМ БЕРКОВИЧ генерал-майор.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 14-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 90 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлă артиллери тăшманăн 25 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Хĕвеланăç Пруссире. Кенигсберг хулинчен кăнтăртарахра, пирĕн çарсем хытă çапăçнă хыççăн нимĕçсене Розиттен ятлă вăйлă çирĕплетнĕ пунктран сирпĕтсе кăларнă. Ку районра трофейсем нумай тытса илнĕ, вăл шутра — 49 паровоз тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем тиенĕ 283 вагон. Тепĕр участокра совет чаçĕсем, нимĕçсен тимĕрпе бетонран тунă укрепленийĕсен тăрăхне çĕмĕрсе тăкса, 10 километр малалла кайнă та Хайнрикау ялне туртса илнĕ. Ку ял Вормдитт хулинчен 6 километр çурçĕртерехре, Вормдитт хулипе Цинтен хули хушшинчи чугун çул çинче ларать. Кун каçиччен 2.000 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, 23 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен тупă пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 500 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсем, наступление малалла вăйлатса пырса, ĕнер Хойнице (Конитц) хулине пырса кĕмелли çулсем çине тухнă. Нимĕçсем хула тавра хирти пек укрепленисем туса тухнă, вĕсене дотсем лартса вăйлатнă, çавăн пекех тата танксене чармалли тарăн каналсем алтнă. Тăшман ку районта йышлă артиллери тата танксемпе пехотăн пысăк вăйĕсене пухнă. Юлашки кунсенче кăна хула гарнизонне пĕр пехотнăй дивизи тата çар училищисен курсанчĕсенчен тунă çапăçу ушкăнĕсем хушса панă. Пирĕн çарсем нимĕç укрепленийĕсене çĕмĕрсе тăкнă та Хойнице хулине кăнтăр енчен вăркăнса кĕрсе кайнă. Ун хыççăн, хĕвелтухăç енчен тата хĕвеланăç енчен пыра-пыра çапса, тăшман оборонине йĕркерен кăларнă. Нимĕçсен гарнизонне пысăк çухату кÿнĕ, вара хулара нимĕç чаçĕсем ним йĕрки-паллисĕр каялла чакма пуçланă. Совет чаçĕсем Хойнице хулине туртса илнĕ чухне нумай хĕçпăшал тата çар хатĕрĕсен склачĕсем тытса илнĕ. Хулана пырса кĕмелли çулсем çинче нимĕçсен 1.500 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ. Тăшманăн 14 танкне çунтарса янă. Хойнице хули нимĕçсен хĕвеланăç Польшăри оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ пулнă. Унсăр пуçне, Хойнице хули çулйĕрсен паха узелĕ пулса тăрать, вăл нимĕç çарĕсен ку районри группировкине мĕн кирлине парса тăнă. Хула патне 6 чугун çул тата 8 шоссе çулĕ пырса тухаççĕ.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсем ăнăçлă наступление малалла вăйлатса пынă. Тăшман кунти çапăçусен районне хыпаланса çĕнĕ чаçсем илсе пырать. Анчах та нимĕçсем, пирĕн çарсене чарса лартасшăн темĕн пек хăтланаççĕ пулин те, нимĕн те тăваймаççĕ. Совет чаçĕсем, тăшман резервĕсене арката-арката, малалла куçса пыраççĕ. Пирĕн Одер шывĕн хĕвеланăç хĕррипе наступлени туса пыракан çăмăллăн куçса çÿрекен соединенисемпе пехота, вăрманлă вырăн урлă каçса, нимĕçсен Грюнберг хулинчи гарнизонне атакăланă. Кăнтăр-хĕвелтухăç енчен тата хĕвелтухăç енчен хăватлăн пыра-пыра çапса, совет чаçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Грюнберг хулине туртса илнĕ. Пирĕн ытти чаçсем çурçĕр-хĕвеланăçнелле çав тери хăвăрт ыткăннă. Совет танкисчĕсемпе пехота хăйсен çулĕ çинчи Бобер шывĕ урлă тата сарăлса кайнă чылай пĕчĕк юхан шывсем урлă каçнă та, нимĕçсен хушăри темиçе оборона позицийĕсене çĕмĕрсе, 40 километр малалла кайнă. Чугун çулсен узелĕ пулса тăракан Зоммерфельд хулине çапăçса туртса илнĕ. Зоммерфельд Германин промышленноçлă пысăк центрĕсем пулса тăракан Губен хулипе Форст хулинчен 18—20 километрта ларать. Хытă çапăçнă хыççăн совет чаçĕсем Зорау хулине туртса илнĕ. Туллимар даннăйсем тăрăх, кун каçиччен нимĕçсен 35 танкне тата 18 бронетранспортерне пĕтерсе тăкнă.

Юлашки 5 кун хушшинче пирĕн çарсем аэродромсенче нимĕçсен 765 самолетне тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Балтика тинĕсĕ хĕрринчи Рихсгефт сăмсахĕ районĕнче тăшманăн темиçе транспортне атакăланă. Летчик Носов тытса пыракан самолета нимĕçсем персе тивертнĕ те вăл çунма пуçланă. Летчик çунакан самолета тÿрех нимĕçсен транспорчĕ çине тытнă та транспорт ăшне касса кĕрсе кайнă. Вăйлă взрыв пулнă. Тăшманăн 6.000 тонна таякан транспорчĕ тинĕс тĕпне путнă. Носов, Игошин тата Дорофеев юлташсенчен тăракан самолет экипажĕ геройла вилĕмпе вилнĕ. Пирĕн ытти самолетсем, малалла атакăласа, нимĕçсен 10 пин тонна таякан тепĕр транспортне тинĕс тĕпне янă.

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем тăшманăн 8 пин тонна таякан транспортне путарнă.

* * *

504-мĕш зенитлă бригадăран тыткăна лекнĕ ефрейтор Макс Молик çапла каласа кăтартнă: «Нимĕç командованийĕ Одер шывĕн хĕвеланăç хĕррине хÿтĕлесе тăракан Штейнау крепоçне хÿтĕлес ĕçе питĕ пысăка хучĕ. Хулана пырса кĕмелли вырăнсенче укрепленисем туса лартрĕç, çав укрепленисенче дотсем питĕ нумайччĕ. Анчах та вырăс çарĕсем Штейнау хулине çавăрса илчĕç. Крепость коменданчĕ Бернард çапла каларĕ: Штейнау хулипе крепоçне темле пулсан та алăран ямалла мар. Кам та кам парăнасси çинчен сăмах калас пулсан, вĕсене çавăнтах персе пăрахатпăр, тесе хăратрĕ. Гарнизон пысăк çухатусем тÿсрĕ. Монастырь аманнă салтаксемпе тата офицерсемпе лăках тулса ларчĕ. Вырăссен пехотипе танкĕсем хулана татса кĕчĕç те пире хĕсме пуçларĕç. Хăйсен лару-тăрăвĕ пĕр шанчăксăррине курсан, салтаксем пĕтĕмпех хăраса ÿкрĕç. Гарнизонăн хирĕç тăма пăрахмалла пулчĕ».

«Гайдрих» ятлă çапăçу ушкăнĕн пĕррemĕш ротинчен тыткăна лекнĕ обер-фельдфебель Людвиг Биндер çапла каласа кăтартнă: «Штейнау хулине эпир танковăй полкпа пĕрле январĕн 27-мĕшĕнче çитрĕмĕр. Вырăс çарĕсем хулана çавăрса илсен, пирĕн ушкăна танксем хушса пачĕç те хупăрласа илнĕ ушкăна шалтан татма приказ пачĕç. Вырăссем аçа-çиçĕм пек хăватлă вут тăкрĕç, вĕсем çавăнтах пирĕн темиçе танка персе çĕмĕрчĕç. Эпир хупăрласа илнĕ унка татаймарăмăр. Пире каялла хулана хăваласа кĕртсе ячĕç, вара эпир унта часах тыткăна парăнтăмăр».

9-мĕш уйрăм танковăй батальонăн 7-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Бернгард Кайн çапла каласа кăтартнă. «Пире питĕ хыпаланса Штейнау районне ячĕç те çул çинчен тÿрех çапăçăва кĕртсе ячĕç. Батальонра 40 танка çити пурччĕ. Вĕсенчен 25-ĕшне çапăçусен малтанхи икĕ кунĕнчех çунтарса ячĕç е персе çĕмĕрчĕç. Ытти танксем вырăссен аллине лекрĕç».

РСФСР Совнаркомĕпе ВЦСПС-ра

РСФСР Совнаркомĕпе ВЦСПС, РСФСР Апат-çимĕç Промышленность Халăх Комиссариачĕн хуласемпе районсенчи апат-çимĕç комбиначĕсен 1945 çулхи январь уйăхĕнчи социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Совнаркомне иккĕмĕш премии пама йышăннă.

Крымри конференци ячĕпе республикăри предприятисемпе колхозсенче пулса иртнĕ митингсем

Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем союзлă виçĕ державăн — Совет Союзĕн, Великобританин тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен — руководителĕсен Крымра пулса иртнĕ историллĕ конференцийĕн решенийĕсене тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Февралĕн 15-мĕшĕнче Давыдова юлташ начальник пулса тăракан цехра конференци решенийĕсем ячĕпе митинг пулса иртрĕ. Цех парторгĕ Водолазская юлташ митингра пулнисене союзлă виçĕ держава руководителĕсем йышăннă решенисемпе тĕплĕн паллаштарчĕ. Рабочисемпе работницăсем çав хыпарсене питех те интересленсе итлерĕç, чылай çынсем тухса каларĕç.

— Фашистла Германи вилĕм шăтăкĕ умĕнче тăрать. Ăна çав шăтăка тăрăнтарас тесен, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине татах та ытларах туса парас пулать,— терĕ митингра фронтовой бригадăн бригадирĕ орденоносец Берехастов юлташ.

Берехастов юлташăн бригади çĕршыври паллă стахановец Егор Агарков меслечĕпе ĕçлет. Хальхи вăхăтра бригада хăйĕн кулленхи нормине ăнăçлăн тултарса пырать. Крымри конференци решенийĕсем çине ответлесе, бригада февраль уйăхĕнчи задание 120 процент тултарма пулчĕ.

Митингра çавăн пекех мастер Гребнева, стахановецсем Ломакин, Броман юлташсем тухса каларĕç. Ломакин стахановец нормăна икĕ хут ытларах тултарса ĕçлеме обязательство илчĕ.

Крымри конференци ячĕпе митингсем Лебедев, Власов юлташсем ертсе пыракан цехсенче те пулса иртнĕ.

* * *

КАНАШ, февралĕн 16-мĕшĕ. (Телефонпа). Союзлă виçĕ держава руководителĕсен Крымри конференцийĕн решенийĕсемпе хулари ĕççыннисем питех те интересленеççĕ. Ĕнер кунта конференци решенийĕсене пичетленĕ «Чăваш Коммуни», «Красная Чувашия» хаçатсем çитрĕç. Крымри конференци ячĕпе хулари чылай предприятисемпе артельсенче митингсем пулса иртрĕç. Рабочисемпе работницăсем союзлă виçĕ держава руководителĕсем йышăннă историллĕ решенисене чĕререн ырлаççĕ. Гитлерла Германие пуçĕпех парăнтарма пулăшакан çав решенисем çине ответлесе тата Хĕрлĕ Çарăн кулленхи çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, хулари предприятисемпе артельсен коллективĕсем февраль уйăхĕнчи программăна срокчен тултарма пулаççĕ.

Çак хаваслă кунсенче предприятисемпе чугун çул çинчи работниксем пысăк çĕкленÿпе ĕçлеççĕ. Вагонсем юсакан заводри чылай стахановецсем сталинла вахтăна тăнă. Давыдова юлташ начальник пулса ĕçлекен цехри токарьсем Карякинăпа Киволюк юлташсем нормăна тăватă хута яхăн, токарь Тимкин юлташ пилĕк хута яхăн ирттерсе тултараççĕ. Бессонов юлташ цехĕнчи Прокопчук мастерăн участокĕ нормăпа пăхнинчен икĕ хут тухăçлăрах ĕçлет.

* * *

СЕНТЕР. Районри ĕççыннисем союзлă виçĕ держава руководителĕсен Крымра пулса иртнĕ конференцийĕн решенийĕсене сÿтсе-яваççĕ. Çавна май, колхозсемпе артельсенче митингсем пулса иртеççĕ. Февралĕн 14-мĕшĕнче районри финанс работникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта Крымри конференцин решенийĕсем çинчен районри финанс пайĕн заведующийĕ П. Чумаков юлташ ăнлантарса пачĕ.

Конференци решенийĕсем çине ответлесе, Шупуç ял Советĕнчи налог агенчĕ Саптеева юлташ пĕррĕмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана Хĕрлĕ Çар уявĕ тĕлне тултарма пулчĕ. Паянхи кун тĕлне Саптеева юлташ 8.000 тенкĕ укçа пухнă.

Районри пур финанс работникĕсем те пĕррĕмĕш кварталти финанс планне срокчен тултарма обязательство илчĕç.

М. КАРПОВ.

Февраль уйăхĕнчи плана Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне тултарассишĕн

ÇĔМĔРЛЕ. Комбинат коллективĕ Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă уява ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленет. Коллектив февраль уйăхĕнчи плана уяв тĕлне тултарма пулнă. Çав обязательствăна пурнăçлассишĕн халĕ кĕрешÿ пырать. Комбинат продукцие графикпа пăхнинчен хăвăртрах туса кăларать. Павлов юлташ начальник пулса тăракан цех малта пырать. Ку цех январь уйăхĕнчи плана чылай ирттерсе тултарнă. Çавăншăн ăна комбинатăн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне тата укçан премии панă. Болотовпа Коршунов юлташсен цехĕсем те лайăх ĕçлеççĕ.

Комбинатри рабочисем хушшинче професси тăрăх ăмăрту сарăлса пырать. Ĕçре уйрăмах палăрнă 20 рабочие комбинатри чи лайăх стахановецсен ятне панă, вĕсен ячĕсене 6 уйăх хушши Хисеп хăмине кĕртсе тăраççĕ. Чи лайăх стахановецсем Корнеев, Ломтев, Бондаренко, Токаев, Велединский юлташсем куллен 4—5 норма тултараççĕ. Вĕсен ĕç пахалăхĕ те аван.

Комбинатра çĕршыври паллă стахановец Егор Агарков меслечĕпе ĕçлесси сарăлса пырать. Производствăри уйрăм участоксемпе бригадăсене пĕрлештерсе, çав участоксемпе бригадăсенчи ытлашши ĕç вăйне урăх çĕре куçараççĕ. Çапла икĕ бригадăна пĕрлештерсе, икĕ мастера, темиçе рабочие урăх ĕçе куçарнă.

Райисполкомсемпе горисполком секретарĕсен канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта район тата хула Совет исполкомĕсен секретарĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу ĕçне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. Андреева, Чăваш АССР Совнарком Председателĕн заместителĕ Терентьев, Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ Таврин, Чăваш республикинчи Çар комиссариатĕнчен Шамшуров юлташсем хутшăнчĕç. Çавăн пекех канашлура нумай ачаллă тата тăлăх пурăнакан амăшĕсене государство пособийĕсем парас тĕлĕшпе ĕçлекен старши инспекторсем те пулчĕç.

Канашлура СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх нумай ачаллă амăшĕсене орденсемпе медальсем парса наградăлас тĕлĕшпе район тата хула Совет исполкомĕсенче материалсем хатĕрлесси çинчен; район, хула тата ял Совет исполкомĕсенчи совет хуçалăхĕ çинчен тата ытти ыйтусене те сÿтсе-яврĕç.

Малтанхи ыйтупа Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ Измайлов юлташ доклад туса пачĕ.

Республикăри чылай районсенче СССР Верховный Совет Президиумĕн 1936 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнчи тата 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнчи Указĕсене тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Сĕнтĕрвăрри районĕнче малтанхи Указ тăрăх хĕрарăмсене 104 пин тенкĕ, иккĕмĕш Указ тăрăх (çур çул хушшинче) 118 пин тенкĕ пособи тÿленĕ. Çавăн пекех Элĕк райсовет исполкомĕ, Шупашкар, Канаш, Улатăр хула Совечĕсем те нумай ачаллă тата тăлăх пурăнакан амăшĕсене темиçе пиншер тенкĕ пособи панă.

Анчах та çак ĕçе пур районсенче те тивĕçлипе пуçарса ярайман-ха. Красноармейски, Советски, Шупашкар районĕсенче нумай ачаллă тата тăлăх пурăнакан хĕрарăмсене пособи пама пачах та тытăнман. Калинино, Кувакино, Муркаш, Шăхасан, Октябрьски районсенче те пособи укçине сахал тÿленĕ. Çакă вăл ĕççынни депутачĕсен район Совечĕ çумĕнчи нумай ачаллă тата тăлăх пурăнакан амăшĕсене государство пособийĕсем парас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсем çавăрăнăçусăр ĕçлениччен килет. Хăшпĕр районсенче çак тарана çитсе те çĕнĕ отделсем тивĕçлипе ĕçе тытăнман. Советскипе Шупашкар районĕсенче пособисем парас тĕлĕшпе ĕçлекен отделсем валли ĕç вырăнĕ те çук. Финанс Халăх Комиссариачĕ çав районсенчи отделсем валли çителĕклĕ таран укçа уйăрса панă пулин те, вĕсем унпа усă курмаççĕ. Хăйсем патне панă заявленисене вăхăтра пăхса тухмаççĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи июлĕн 8-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх нумай амăшĕсем орденсемпе медальсем илеççĕ. Пирĕн республикăра вĕсен хисепĕ 30 пин çынна çитет. Орденсемпе медальсем илекенсен йышĕ Вăрмар районĕнче кăна 1.791 çын, Елчĕк районĕнче 1.728 çын, Октябрьски районра 1.352 çын шутланать.

Район, хула тата ял Совет исполкомĕсен нумай ачаллă хĕрарăмсене шута илмелле çеç мар, вĕсем пирки документсем те пухса йĕркелес пулать.

Хăшпĕр районсем çак ĕçе вăраха тăсаççĕ. Элĕк, Ишлей, Муркаш, Чкаловски, Чурачăк районĕсем орденсемпе медальсем пама пĕр материал та тăратман. Шăмăршă, Чурачăк, Чкаловски районсем награда пама тивĕçлĕ хĕрарăмсене пачах та шута илмен.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. Андреева юлташ хăйĕн сăмахĕнче нумай ачаллă амăшĕсене государство пособине йĕркеллĕ парса тăман районсене, награда илме материалсем хатĕрлес ĕçри çитменлĕхсене критиклерĕ, çак ĕç тавра политикăллă ăнлантару ĕçне анлăн сарса пыма чĕнчĕ.

Канашлу хăйĕн кун йĕркинчи ытти ыйтусене те тĕплĕн сÿтсе-яврĕ.

ХАЛĂХ СТРОЙКИ

ЕТЕРНЕ. Уйăх ытларах каялла районри колхозсенче колхозниксен пухăвĕсем пулса иртрĕç. Çав пухусенче Мускав облаçĕнчи Ногинск районĕнчи колхозниксен пуçарăвне сÿтсе-явнă, татăклă решенисем йышăнса хăварнă. Кĕçĕн Чураш, Мăн Шемертенпе Кĕçĕн Шемертен, Кĕçĕн Хăмарка, Егоркино, Уйкас колхозĕсем МТС йĕри-тавра хÿме çавăрма йышăннă. Вĕсем стройматериалсене те хăйсем хатĕрлесçĕ, çурса савала çĕ. Пĕтĕмпе 2700 метр тăршшĕ хÿме çавăрасçĕ ку колхозсем. Балдай ялсоветĕнчи колхозсем пысăк мунча туса параççĕ. Районри колхозсен вăйĕпех машинăсем юсамалли мастерской, çăл. ялхуçалăх машинисем валли сарай т. ыт. те тума пăхнă. Çак ĕçсене çĕнтерÿллĕ Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă тĕле пурнăçламалла.

Халĕ МТС картишĕнче хĕрÿ ĕç пырать. Район центрĕнчи рабочисемпе служащисем стройкăра кирлĕ çĕр ĕçĕсене тăваççĕ. ВКП(б) райкомĕн коллективĕ ку енĕпе хăйĕн планне тахçанах пурнăçларĕ. Колхозсем хĕрсех стройматериалсем турттараççĕ, колхозсенчен платниксем те килсе çитрĕç.

Чакаварти «Париж Коммуни» колхоз 12 тонна известь, Кĕçĕн Чутайпа Шоркино колхозĕсем 5-шер тонна хатĕрлесе турттараççĕ. Мичурин ячĕпе тăракан, «Пионер», «Дружба», «Сура», «Комбайн» колхозсем, 190 кубометр чул хатĕрлесе турттарса, хăйсем çине илнĕ обязательствăна пурнăçларĕç те ĕнтĕ. Çавăн пекех Никольски, Ораба-Павлово, Засурек колхозĕсем те стройматериал хатĕрлесе турттарма пăхнă плана ытлашшипех тултарнă. Тури Мучарпа Анатри Мучар колхозĕсем МТС-ăн сарайне юсаса витме тытăнчĕç.

Çак ĕçре, халăх стройкинче, районри комсомол организацийĕсен пархатарлă ĕçĕсене те кăтартмалла. Вĕсем МТС валли 120 кубометр стройматериал, 1600 кирпĕчĕ, 68 килограмм пăта, 870 килограмм мунчала тупма сăмах панă. Комсомолăн районри пумай организацийĕсем хăйсем çине илнĕ обязательствăна пурнăçларĕç те ĕнтĕ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

ХĂÇАН РЕВИЗИ ТУСА ПĔТЕРĔÇÇĔ?

Чурачăк районĕнчи «Радио» колхозра 1944 çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласах ревизи тăваççĕ. анчах çав ĕç хăçан пĕтесси паянхи куна çитсе те курăнмасть. Ревизи комисси председателĕ Н. Петров, членĕсем М. Ефимов, В. Петров юлташсем пиккенерех ĕçлеменни, колхоза çулталăкри отчета тума чăрмантарать, çавăн пекех колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх тырă валеçсе пама чарса тăрать.

Ревизи комисси членĕсем, ĕçкунĕ ытларах илес кăмăлпа, хăйсен ĕçне 3—4 уйăха тăсма шутлаççĕ пулас. Ревизи комиссийĕ ялхуçалăх артелĕн уставне пăснă, вăл кашни кварталта ревизи туса пыман.

1944 çулта колхозниксемпе колхозницăсем, тăрăшса ĕçлесе, пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра парса татрĕç, кирлĕ фондсене те çителĕклĕ уйăрчĕç.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнчи тупăша ĕçкунĕсем тăрăх тĕрĕс валеçсе, колхозниксене 1945 çулта вăйлă тырпулшăн кĕрешме татах та ытларах хавхалантарас вырăнне, ревизи комиссийĕ пĕтĕм ĕçе чăрмантарса пырать, çавăн пекех колхозăн производство планне те тума чарса тăрать.

Колхозра ревизи ĕçĕ çакăн пек чăтма çук тăсăлса пынине районри çĕрĕç пайĕнче те пĕлеççĕ. Анчах ĕçе тÿрлетессишĕн сахал тăрăшаççĕ.

Ф. ФЕДОТОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен районри пухăвĕ

КАЛИНИНО. (Хамăр корр.). Нумаях пулмасть кунта коммунистсен районри пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Кудряшов юлташ парти райкомĕн ĕçĕсем çинчен отчет туса пачĕ.

Район 1944 çулхи ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленĕ. государствăна тыр' памалли плана вăхăтра тултарнă. Районĕпе кашни гектартан вăтам шутпа 13,7 центнер тĕштырă туса илнĕ. Çуракине 12 кунта ирттернĕ, кĕрхи тырăсене 9 кунта, çурхи тырăсене 13 кунта вырса пуçтарнă, появрĕн 5-мĕшĕ тĕлне авăн çапса пĕтернĕ. «Броневик», «Çутталла», «Майĕн 1-мĕшĕ» колхозсем ку ĕçсенче уйрăмах малта пынă. Сăкăт, Кадеркино ялĕсенчи çулран çулах юлса пыракан колхозсем иртнĕ çулта та начар ĕçлерĕç. Ку колхозсенче коммунистсем те пур. Анчах вĕсем ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Коммунистсен районри пухăвĕ çитес çуракине хатĕрленес ĕç те çителĕксĕр пынине палăртрĕ. Февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне районĕпе вăрлăх 97 процент чухлĕ çеç хатĕрленĕ. 16 колхозра сĕлĕ тата тулă вăрлăхĕсем çитмеççĕ. Уя тислĕк кăларас тĕлĕшпе районри колхозсем плана 49 процент çеç тултарнă. Çавăн пекех вырăнти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе те çеç вăрахăн пырать.

Парти районри пухăвĕ МТС çителĕксĕр ĕçленине палăртрĕ. Уборка вăхăтĕнче 9 комбайнран 5-шĕ çеç ĕçе юрăхлă пулнă. Çавăн пекех МТС-ри строительство ĕçĕ те питех те вăраххăн пырать. Хăшпĕр колхозсем çуртсем тума, стройматериалсем турттарма çынсем ямаççĕ.

Пухура самокритика вăйлă пулчĕ. Доклад хыççăн прение 22 çын тухса калаçрĕç. Вĕсем район государствăна çĕрулми, сĕт-çу-кантăр парас тĕлĕшпе плана пурнăçла маннине, Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тырă памалли обязательствăна тултарманнине хыттăн критиклерĕç. Пухура ВКП(б) Обкомĕн представителĕ Кузнецов юлташ пулчĕ.

Пуху 19 çынтан райком пленумĕн членĕсене суйласа хăварчĕ. Парти райкомĕн организациллĕ пленумĕ ВКП(б) райкомĕн 1-мĕш секретарĕ пулса ĕçлеме Никитин юлташа, 2-мĕш секретарĕ пулса ĕçлеме Саперкин юлташа, 3-мĕш секретарĕ пулса ĕçлеме Воробьев юлташа суйларĕ. Районри хаçатăн редакторĕ пулса ĕçлеме Григорьева юлташа çирĕплетнĕ.

ВЛКСМ Сĕнтĕрвăрри райкомĕ шкулти организацисене начар ертсе пырать

ВЛКСМ Обкомĕ çак кунсенче ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII Пленумĕ «Комсомолăн шкулсенчи ĕçне лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление мĕнле пурнăçлани çинчен» комсомолăн Сĕнтĕрвăрри райком секретарĕн Егорова юлташăн отчетне итлесе сÿтсе-яврĕ.

ВЛКСМ райкомĕ те, пуçламĕш организацисем те шкулсенчи вĕренÿ пахалăхне хăпартас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, учительсене начар пулăшаççĕ. Нумай шкулсенче комсомолецсемпе пионерсем вĕренÿре малта пыраймаççĕ. Кăçалхи вĕренÿ çулĕн малтанхи çурçулĕнче 4497 вĕренекенрен 858-шĕ вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайман.

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ Сĕнтĕрвăрри райкомĕ шкулсенчи комсомол тата пионер организацисене çителĕксĕр ертсе пынине палăртрĕ. Сотниковăри вăтам шкулта тата çичĕ çул вĕренмелли 8 шкулта комсомол организацисем çук. Кĕçĕн Астакассинчи, Нерет Салипе Новинскри çичĕ çул вĕренмелли тата районри пĕр пуçламĕш шкулта пионер организацисем ĕçлемеççĕ. Хăшпĕр шкулсенчи комсомол организацисем начах ĕçлемеççĕ. Вĕренÿре ĕлкĕрсе пырайман, дисциплинăна пăсакан комсомолецсем çинчен пухусенче сÿтсе-явни, вĕсене юсама пулăшни çук. Шкул директорĕсемпе учительсене вĕренÿ пахалăхне хăпартас ĕçре пулăшмаççĕ.

Шкулсенчи комсомол организацисем шкул ачисене политикăллă воспитани парас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Сталин юлташăн «Совет Союзĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнеки тăрăх вĕренме кружоксем организацилемен. Вĕренекенсем хушшинче политикăллă ĕçе питех те начар туса пынине пула, 1944—1945 вĕренÿ çулĕнче шкулсенчи 144 организацирен 11-шĕнче пĕр çамрăка та комсомол ретне явăçтарман.

ВЛКСМ райкомĕ пионер организацисене пачах та çителĕксĕр ертсе пырать. Нумай шкулсенче отрядсемпе звеносем туман, пуррисем те хут çинче çеç шутланса тăраççĕ. Кунта вожатăйсемпе ĕçлемеççĕ, вĕсене ĕçре пулăшни, отчетсем итлени, пĕрпĕрин ĕçĕсемпе паллашни çук. Кăçалхи вĕренÿ çулĕн малтанхи çурçулĕнче вожатăйсемпе пĕр семинар та ирттермен. Вожатăйсене ВЛКСМ райком бюровĕнче çирĕплетмеççĕ.

ВЛКСМ райкомĕ учительсене комсомол тата пионер организацисен ĕçне хутшăнтарман, вĕсемпе çыхăнса ĕçлемест.

ВЛКСМ райком секретарĕсем шкулсенче пулмаççĕ, шкулсенчи комсомол тата пионер организацисен ĕçĕсемпе интересленмеççĕ, çамрăк ăрăва воспитани пама кирлĕ пĕлĕве илессишĕн тăрăшмаççĕ.

Çак фактсем ВЛКСМ Сĕнтĕрвăрри райкомĕ ачасем хушшинчи ĕçе ертсе пыманни çинчен калаççĕ.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII Пленумĕ «Комсомолăн шкулсенчи ĕçне лайăхлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановление пурнăçлас ĕç çине ответсăррăн пăхнăшăн, шкулсенчи комсомол тата пионер организацисен ĕçĕсене япăхтарса янăшăн ВЛКСМ Сĕнтĕрвăрри райкомĕн секретарьне Егорова юлташа ятланă.

Комсомол райкомĕн бюровне тата унăн секретарьне Егорова юлташа, ВЛКСМ Обком бюровĕн постановленинче кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерсе, ВЛКСМ Центральный Комитечĕн XII Пленумĕн решенине пурнăçлама хушса хăварнă.

Вожатăйсемпе ĕçлессине лайăхлатас майпа вĕсемпе виçĕ кунлăх семинар ирттерме палăртнă.

Сĕнтĕрвăрринче комсомол активĕ валли ачасене воспитани парас ыйтупа лекцисем тата вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсемпе калаçусем ирттерессине организацилеме хушнă.

ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ кăтартнă çитменлĕхсем ытти районсенче те пур. Комсомолăн шкулсенчи ĕçне çитес кĕске вăхăтрах лайăхлатмалла.

Вăрман хатĕрлевĕнчи фронтри пек ĕçлемелли уйăхлăх

ВУТĂ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА КАШНИ КОЛХОЗĂН ТУЛТАРМАЛЛА

СЕНТЕРВАРРИ. Районри чылай колхозсем Хĕрлĕ Çар кунне чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес плана тултарнипе кĕтсе илеççĕ. Февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне Юркакасси ял Советне кĕрекен «Искра», Камай ял Советне кĕрекен «1-ое Мая» колхозсем плана 100-шер процент, «Власть труда», «Шордан» колхозсем — 103-шер процент тултарчĕç. Ку колхозсем чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе пĕр-перинпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Çав вăхăтрах чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес ĕçре юлса пыракан колхозсем те пур. Чкалов ячĕпе тăракан, «14 лет Чувашии» тата «Красная Звезда» колхозсем плана 22—38 процент çеç тултарнă. Çак колхозсен руководителĕсем тата унти ял Совечĕсен председателĕсем чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлес тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ.

И. ОСИПОВ.

КУНТА ВУТĂ ХАТĔРЛЕС ĔÇЕ ХАКЛАМАÇÇĔ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). «Сила» колхоз, чугун çул транспорчĕ валли вутă хатĕрлемелли тата турттармалли уйăхлăха хутшăнса, вăрманта ĕçлеме 12 çын çуран, 8 çын лашапа янă. Çав çынсем халĕ вутă касмалли тата турттармалли нормăна ирттерсе тултарса ĕçлеççĕ. Вăрманта ĕçлекенсене колхоз председателĕ Павлов юлташ хăй ертсе пырать. Колхоз паянхи куна 408 кубометр вутă хатĕрленĕ, 307 кубометр турттарса тухнă. Колхоз вутă хатĕрлемелли плана çак кунсенчех тултарать.

Çав вăхăтрах Буденный ячĕпе тăракан колхоз вутă хатĕрлес ĕçре юлса пырать. Ку колхоз фронтовой уйăхлăха хутшăнман. Колхоз председателĕ Алексеев юлташ вăрманта ĕçлеме ĕç вăйĕ халĕ те яман.

С. ШАДИН,
Н. ХАТАЕВСКИЙ.

Фронтовиксен ачисене — комсомолла пулăшу

Хĕрлĕ Çар кунĕ çывхарса килнĕ май комсомол организацийĕсем фронтовиксен ачисене пулăшас ĕçе нумай лайăхлатрĕç.

ВЛКСМ Советски райкомĕ, çĕнĕ çултан пуçласа, фронтовиксен шкулсенче отлично вĕренекен 10 ачине кашнине уйăхра 100-шер тенкĕ стипенди парса тăрать. Комсомольски районри комсомолецсемпе çамрăксем колхозри ачасен çуртĕнчи воспитанниксем валли ăшă кĕпе-тумтирсем хатĕрлеççĕ. Комсомолăн нумай райкомĕсем концертсем, художествăллă пултарулăх вечерĕсем ирттереççĕ. Çав концертсемпе вечерсем ирттерсе пухнă укçана пĕтĕмпех фронтовиксен ачисене пулăшмалли фонда параççĕ.

ВЛКСМ Обкомĕ, комсомолăн Советски тата Комсомольски районсенчи организацийĕсен пуçарăвне ырласа, çак ĕçе татах та анлăнрах сарса пыма кирлĕ тесе палăртрĕ. Çав майпа ВЛКСМ Обкомĕн бюровĕ комсомолăн пур райкомĕсемпе хула комитечĕсене те, район тата хула совечĕсем çумĕнчи гособеспечени отделĕсемпе пĕрле, фронтовиксен ачисем валли Хĕрлĕ Çар кунĕ ячĕпе парнесем хатĕрлеме хушнă. Çав парнесен шутĕнче апат-çимĕç, укçа е ачасене кирлĕ ытти тĕрлĕ япаласем пулмалла.

Февраль уйăхĕнче фронтовиксен ачисене пулăшма комсомолецсемпе çамрăксем икĕ воскресник ирттереççĕ.

ВЛКСМ Обкомĕ фронтовиксен шкулта отлично вĕренекен ачисене пама 100-шер тенкĕлĕх 200 стипенди тума йышăннă.

ВЦСПС Президиумĕнче

Рабочисемпе служащисен пахчисенче çурхи ĕçсене хатĕрлесси çинчен

ВЦСПС Президиумĕ рабочисемпе служащисен уйрăм тата пĕрлешÿллĕ пахчисенче 1945 çулхи çурхи ĕçсене хатĕрлесси çинчен решени йышăннă. Профсоюз организацийĕсене акакан çĕр лаптăкне тата ытларах ÿстерме, çĕрулмипе пахча-çимĕç тухăçлăхне хăпартма, пахча-çимĕç тăвас ĕçе производствăна çĕнĕрен пынă рабочисене, пуринчен ытла çар çыннисен çемьисемпе Отечественнăй вăрçă инваличĕсене хутшăнтарма хушса хăварнă. Уйрăм тата пĕрлешÿллĕ пахчасем тăвассине пуринчен ытла Украина, Белоруссия, Молдави, Литва, Латви, Эстони республикисенчи рабочисемпе служащисем хушшинче тата нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă ытти районсенчи рабочисемпе служащисем хушшинче ытларах сармалла. Профсоюзсен фабрикăпа завод комитечĕсен, месткомсен тата пахча-çимĕç комиссийĕсен агротехникăллă ĕçсем тунине—вăхăтра удобрени кăларнине, çĕре мĕнле сухаланине, пахча-çимĕç ÿсне чухне ăна яланах лайăх пăхнине контроллесе тăмалла. Ку ыйтусемпе докладсем, лекцисем, калаçусем, консультацисем туса ирттермелле, çурхи ĕçсем пуçланичченех кашни çынна кирлĕ таран вăрлăх хатĕрлеме пулăшмалла.

ВЦСПС Президиумĕ профорганизацисене тата пахча-çимĕç комиссийĕсене кăçалхи çул рабочисемпе служащисен пахчисенче пăрса йышши культурасем ытларах акса хăварма сĕнет. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла калать: Германире, Клеве хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăç енерехре, çĕнĕ тухнă пулин те, союзниксен çарĕсем наступлени туса пынă. Союзниксен çарĕсем Рейхсвальд вăрманне тăшмантан тасатнă тата Ведбург хулинчен кăнтăртарахра тăшман тунă контратакăна сирсе янă.

Рейн облаçĕнче, Прюм хулин çурçĕр пайĕнче, союзниксен çарĕсем хĕвелтухăç енчен ывăнса урлă каçса контратака тунă тăшман чаçĕсене хăваласа янă.

Эхтернах патĕнче (Люксембургра) союзниксен çарĕсем Болленсдорф хулинчен 2 миля çурă çурçĕртерехри района çитнĕ. Хаяр çапăçусем хыççăн тăшмана Эхтернахран çурçĕртерехре ларакан Эрнцен хулинчен хăваласа кăларнă.

Ремихрана кăнтăр-хĕвеланăçнерехре (Люксембургра). Зинцран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри районра, çĕнĕ çитĕнÿсем тунă. Гардт тăвĕсенчен хĕвеланăçнерехри секторта тата Çурçĕр Эльзас тÿремĕнче лăпкă. Обергофена тăшмантан тасатнă. Кольмар районне тăшмантан тасатнă вăхăтра тыткăна илнĕ çынсен шучĕ 20.000 çынна çитет.

Февралĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Германие тапаннă. Пырса тапаннă тĕп объектсем хушшинче Хемниц хули пулнă. Хемниц хули çине икĕ хутчен бомбăсем пăрахнă. Бомбардировщиксен тепĕр пысăк соединенийĕ Лейпциг хулинчен кăнтăртарахра ларакан Розицри синтетически горючи заводне тапаннă. Берлин çине те бомбăсем пăрахнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ВĂЙЛĂН ТАПАННИ

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен 1.400 бомбардировщикĕ Германие тапаннă. Пуринчен вăйлăрах Дрезден хулине тапаннă. Американецсен 1.300 бомбардировщикĕ, 900 ытла истребитель хÿтĕлесе пынипе, Дрезденпа, Хемницри тата Магдебургри транспортпа промышленность объекчĕсене тапаннă.

Союзлă виçĕ держава руководителĕсен Крымри конференцийĕн решенийĕсем çинчен ют çĕршывсенче мĕн калаççĕ

АНГЛИ

ЛОНДОН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Конференцин решенийĕсене саламласа, «Ивнинг Стандард» хаçат çав конференци Польшăпа Югослави ыйтăвĕсене татса панине палăртать. «Конференципе тата Францие хăрушсăрлăхĕн тахçантанпах тăракан йывăр ыйтăвĕсене татса памалли сĕнÿсем кăларса тăратнă. Пĕтĕм Европăна ирĕке кăлармалли майсене лайăх палăртса хунă... Паянхи вăрçăра пĕрлĕхлĕ пулнине çак аслă союз ыранхи мир вăхăтĕнче те çаплах хăварĕ. Çапла ĕнтĕ, çапăçăва тухăр!»

«Манчестр гардиан» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Пысăк тройка» Крымра тĕл пулнин результачĕ ун çинче шанса тăпине пĕтĕмпе тенĕ пекех татса парать. Нумай ыйтусемпе пĕтĕмпех калаçса таталнă». Хаçат уйрăмăнах Польша ыйтăвĕпе килĕшсе таталнине саламлать.

«Ньюс кроникл» хаçат редакци çырнă статьяра Крымри конференцин результачĕсем çинчен пĕлтернине саламлать. Вăл документ Германие аркатса тăкассине тата пĕтĕм тĕнчипех мир тăвассине планлать. Германие оккупацилес ĕçе Францие хутшăнтарнине Думбартон-Оксри конференцин сĕнĕвĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе йышăннă мерăсене саламланă пекех саламлать. Хаçат çапла çырать: «Польша ыйтăвне татса панине уйрăмăнах ырласа паллă тăвас пулать. Ку ĕнтĕ пит те кĕткĕс ыйту пулнă. Çав ыйтăва татса пани ирĕклĕ халăхсем пĕрлешсе пурăнассине ырланине пĕлтерет».

«Крымри конференци,—çырать «Дейли мейл» хаçат редакцийĕ,—этемлĕх историйĕнче уйрăм тапхăр пулса юлать. Ку таранччен нихăçан та çакăн пек кĕске вăхăт хушшинче çав тери пысăк результат паракан тĕлпулу, çав тери паллă решенисем йышăнса хăварнă тĕлпулу пулман. Çак сакăр кун Европăри мире урăхла йĕркелесе ярĕ».

«Йоркшир пост» хаçат шухăшĕпе, Крымри конференцин результачĕсем çинчен пĕлтерни мирĕн тата пĕтĕм тĕнчипех пĕрлешсе ĕçлессин çĕнĕ пуласлăхне уçса парать.

«Нацистсем,—çырать малалла хаçат,—союзниксем уйăрăлса каясси çине шанса тăнăччĕ. Крымра вĕсен çак юлашки шанăчĕсене те сÿнтерсе лартрĕç».

США.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Крымри конференци историллĕ декларацине Пĕрлешÿллĕ Штатсенче пысăк хаваслăхпа йышăннă. Ирхи хаçатсем ĕнер Крымри конференцин результачĕсем çинчен пысăк заголовоксемпе пичетленĕ, вĕсене чунтан-чĕререн саламланă. Пур хаçатсем те конференцире ÿкерчĕ фотографисене пичетлесе кăларнă.

Вашингтонри корреспондентсем конференцире вăрçă ыйтăвĕсемпе йышăннă решенисем, çавăн пекех Германи тĕлĕшпе, ирĕке тухнă районсем тĕлĕшпе, пуринчен ытла Польша тĕлĕшпе йышăннă решенисем питĕ паха пулнине палăртса çыраççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн умстатьинче çапла каланă: Крымри декларацие пĕррремĕш хут вуласа тухсанах, виçĕ держава тунă килĕшÿ ырăнлă та тĕрĕс пулнине тата вăл нумайĕшĕ шанса тăнинчен нумай мала иртсе кайнине куратăн, тенĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Крымри килĕшÿ союзниксен пĕрлĕхне тата вĕсен решенийĕсем мĕн тери вăйлă пулнине тепĕр хут кăтартса парать.

Америкăри радиообозревательсем те Крымри конференцире тунă килĕшÿве саламлаççĕ. Радиокомментатор Суинг каланă тăрăх, пĕрлешсе ĕçлеме килĕшни Крымри конференцин тĕп шухăшĕ пулнă. Суинг каланă тăрăх, çавăн пек пĕрлешсе ĕçлени планах мир тытса тăракан организаци çирĕп пулассине пĕлтерет. Польша пирки тунă килĕшÿ çавăн пек пĕрлешсе ĕçлесине лайăх кăтартса парать.

«Черчилль, Сталин тата Рузвельт, — çырать «ПМ» хаçат,—пĕтĕм культурăллă тĕнчен тавне тивĕçлĕ пулчĕç. Вĕсем Польша ыйтăвне, Германие оккупацилес ыйтупа тата ирĕке кăларнă çĕршывсенче правительствăсем туса хурас ыйтупа калаçса таталнă. Тĕнĕл çĕршывсем шăп çав ыйтусемпе Англие, Совет Союзне тата Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсене пĕр-перинпе хирĕçтерсе яма шутланăччĕ».

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери конференцийĕнче

В. В. КУЗНЕЦОВ ЮЛТАШ ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОФСОЮЗСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔНЧЕ КАЛАНА САМАХ

ЛОНДОН, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Совет делегацийĕн руководителĕ В. В. Кузнецов юлташ пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕнче профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери организацине туса хурас ыйту пирки сăмах тухса каланă.

«Нимĕçсен вăрă-хурахла империализмне хирĕç пыракан кĕрешÿ вутĕнче,—тенĕ Кузнецов юлташ,—рабочи класăн пĕрлĕхĕ пулса тăчĕ. Ирĕклĕхшĕн пыракан движенин ăнăçлă пулнинче вăл пит пысăк вырăн йышăнчĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвне туса хурас ыйтăва сÿтсе-явнине профсоюзсен анлă общественноçĕ пĕр канашлă пулса ырлать. Профсоюзсен организацийĕ мĕнле çуралнине пирĕн аякран пăхса çеç тăмалла мар. Çав питĕ кирлĕ организацие чăсрах туса хума пирĕн пĕтĕм вăйпа пулăшмалла. Çак историллĕ тапхăрта пăрăнса юлакансене е аякран пăхса тăракансене рабочи класс нихăçан та каçарас çук». Кузнецов юлташ совет делегацийĕ Хиллмэн тунă сĕнÿсемпе килĕшни çинчен тата вăл сĕнÿсене пурнăçлама пулăшма пулни çинчен пĕлтернĕ.

«Совет профсоюзĕсем,—тенĕ малалла Кузнецов юлташ,—профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвне анлă демократи никĕсĕ çинче тата ирĕклĕхе юратакан çĕршывсенчи профсоюзсем пĕр-перинпе тăванла таччăн çыхăнса тăнă никĕс çинче туса хумалла, тет. Вăл пĕрлешÿ пур рабочисемпе служащисене, вĕсем халăх мĕнле раса çыннисем пулнине тата мĕнле тĕн тытнине пăхмасăрах, пĕрлештерсе тăмалла. Профсоюз активисчĕсем, пĕрсаслă пулса, профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлĕхне туса хурасшăн пулнине пĕлтерчĕç. Демократиллĕ çĕршывсенчи рабочисем пĕр-перинпе çыхăнса тăни çав пĕрлĕхе пурнăçа кĕртес ĕçре паллă вырăн йышăнса тăрать, тесе шутлаççĕ. Рабочисем, пирĕн профсоюзсен Центральный Комитечĕсем тата ВЦСПС çак конференцире профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери вăйлă организацине туса хурассине ырларĕç. Çав организацисем пурте вăл ыйтăва конференцире хускатса яма тата вăл ыйтăва татса парас ĕçе активлăн хутшăнма хушса ячĕç.

Пирĕн профсоюз работникĕсем тата профсоюз членĕсем нумайĕшĕ çапла шутлаççĕ: профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ пĕрлешĕвĕ профсоюзсен юхăмĕн пĕтĕм чĕрĕ вăйĕсене пĕтĕçтерсе тăмалла, вăл кивĕ шухăшсемпе йăласене пăрахăçа кăларакан организаци пулмалла. Вăл организаци фашизма хирĕç тата кирек епле агрессие хирĕç кĕрешме тăрăшакан профсоюзсен пур организацийĕсене те пĕрлештермелле. Паллах ĕнтĕ, профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕ хăйĕн задачисемпе ĕç меточĕсем тăрăх çĕнĕ условисенче ĕçлеме юрăхлă пулмалла. Профсоюзсен хальхи вăхăтри тĕп задачи—гитлеризма хăвăртрах аркатса тăкасси тата нумай вăхăта пыракан çирĕп мир туса хума пулăшасси пулса тăрать. Фашизма пур çĕрте те—политикăра та, идеологире те—пур вырăнта та пăрахăça кăлармалла.

Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн, рабочи класа пĕтĕçтерсе, унăн активлă тата авторитетлă представителĕ пулса, вăрçă хыççăнхи мир ыйтăвĕсене татса паракан пĕтĕм тĕнчери органсене хутшăнмалла пулать. Профсоюзсен çĕнĕ пĕрлешĕвне демократиллĕ пур çĕршывсенчи профсоюзсем тата пур çĕршывсенчи профсоюзсен центрĕсем те кĕмелле. Çавăн пекех центрсем пĕрре кăна мар пулсан та, вĕсем пурте çав пĕрлешĕве кĕмелле. Профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери пĕрлешĕвĕн задачи—пĕр-пĕр наци профсоюзĕсен пĕрлĕхне туса хума пулăшасси пулса тăрать».

«Пĕрремĕш вăрçă, — тенĕ юлашкинчен Кузнецов юлташ,—тĕрлĕ çĕршывсенчи рабочи класа пĕр-перинчен уйăрса янă пулсан, вăл вăрçă хыççăн тĕнчери çыхăнусене тепĕр хут пит йывăррăн йĕркелесе янă пулсан, хальхи вăрçăра демократиллĕ çĕршывсенчи рабочисен организацийĕсем пĕтĕмĕшле тăшмана хирĕç—фашизма хирĕç кĕрешме пĕрлешрĕç. Çавăнпа та хальхи вăхăтра профсоюзсен пĕтĕм тĕнчери вăйлă пĕрлешĕвне туса хума нимĕн те чăрмантарма пултараймасть.

Совет профсоюзĕсем пирĕн конференци ĕçĕсене пысăк интереспа сăнаса тăраççĕ. Вĕсем пирĕн конференци профсоюзсен тĕнчери чăн-чăн пĕрлешĕвĕн никĕсне туса хурĕç, вăл вара мирĕн, ирĕклĕхĕн тата прогресăн тĕрекĕ пулса тăрĕ, тесе ĕмĕтленеççĕ».

РУМЫНИ ПАТРИАРХĔ НИКОДИМ ЯНА ÇЫРУ

БУХАРЕСТ, февралĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири радио пĕлтернĕ тăрăх, Румыни патриархĕ Никодим Союзниксен Контроль Комиссийĕн Председателĕн заместителĕ Виноградов генерал-лейтенант патне çыру янă. Вăл çырура Никодим совет чаçĕсем Румыни монастырĕсене хисеплесе вĕсемшĕн тăрăшнăшăн тав тăвать.

ЧЕРЧИЛЛЬ, ИДЕН ТАТА АЛЕКСАНДЕР АФИНЫ ХУЛИНЕ ПЫНА

ЛОНДОН, февралĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Афины хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, унта Черчилль, Иден тата Александер пырса çитнĕ. Черчилль Конституци площадĕнче сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл «çĕнтерÿллĕ халăхсем хушшинче, çак вăрçăра çав тери пысăк никĕс курнă халăхсем хушшинче Греци хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнĕ», тесе шанса каланă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ЯПОНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океан тăврашĕнчи кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн пĕлтерĕвĕнче каланă тăрăх, Америка çарĕсем Манила хулин кăнтăр пайне японецсенчен тасатса пыраççĕ.

ВАШИНГТОН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). США-н çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен Мариан утравĕсем çинчи «Вĕçекен крепость» йышши вăйлăран та вăйлă бомбардировщикĕсем февралĕн 10-мĕшĕнче Японие тапаннă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

М. ДАНИЛОВ—ЧАЛДУН КАЛАВĔСЕМ

Чăвашсен Государство Издательстви, нимĕç захватчикĕсене хирĕç паттăррăн çапăçса пуçне хунă писателĕн—М. Данилов-Чалдунăн чи паха калавĕсене суйласа илсе, уйрăм кĕнеке туса кăларма хатĕрленĕ. Сборнике писатель тĕрлĕ вăхăтсенче çырнă калавсем кĕреççĕ. Данилов-Чалдунăн пурнăçĕпе творчестви çинчен чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер умстатья çырать.

«ТИМУР ТУСĔСЕМ»

Кĕçĕн çулхи ачасем валли Аркадий Еçхĕл çырнă «Тимур тусĕсем» ятлă сăвăсен кĕнеки тухать. Кĕнекепе пĕтĕмпех çĕнĕ произведенисем кĕреççĕ.

«ЧĂВАШ ХАЛĂХĔН НАУКĂПА КУЛЬТУРА ДЕЯТЕЛĔСЕМ»

1945 çулхи план тăрăх, Чăвашгосиздатра çав ятлă кĕнеке тухмалла. Унта чăваш халăхĕн наукăпа культура тĕлĕшпе ĕçленĕ паллă çыннисен—К. В. Иванов, Н. И. Ашмарин, М. Федоров, Ф. П. Павлов, Çеçпĕл Мишши, Тайăр Тимки писательсен, граждан вăрçи геройĕсен—В. И. Чапаевăн, Крепковăн, Космовскин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен çырнă статьясем пулаççĕ.

НАУКĂПА ИСТОРИ ЫЙТĂВĔСЕМ ТĂРĂХ ЛЕКЦИСЕМ

Комсомольски районри çутĕç пайĕ çумĕнче лекторсен группине туса йĕркеленĕ. Группăра 15 çын тăрать. Лекторсем колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче наукăпа истори ыйтăвĕсемпе лекцисем вулаççĕ.

Нумаях пулмасть Е. Самойлова лектор «Трактор», «Коммунар» колхозсенче «Çĕр çинче пурнăç мĕнле пуçланса кайни çинчен» лекци вуланă. Çав темăпах М. Маслова юлташ та «Интернационал» колхозра лекци вуласа панă. Лектор Г. Кривошеев юлташ Александровка ял Советне кĕрекен колхозсенче «1812-мĕш çулхи Отечественнăй вăрçă çинчен», А. Кондратьев лектор Кĕçĕн Çĕрпÿел ял Советне кĕрекен колхозсенче «Александр Невский, Александр Суворов, Михаил Кутузов—пирĕн ĕлĕкхи паллă çынсем» темăпа лекцисем ирттернĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çакăн пек лекцисемпе питĕ интересленеççĕ.

ÇĔНТЕРÜ ФОНДНЕ

Хĕрлĕ Çарăн историллĕ çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, Шăхасанти вăтам шкулта вĕренекенсем çак кунсенче çĕнтерÿ фондне 6.690 тенкĕлĕх государство заемĕсен облигацийĕсене тата 412 тенкĕ укçа пухса панă. 8-мĕш класра вĕренекенсем Е. Михайлова—500 тенкĕлĕх, Л. Щербакова—600 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем панă.

Çак паха ĕçе комсомолăн шкулти пуçламĕш организацийĕ пуçарса ертсе пынă.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ кăçал колхоз председателĕсен пĕрер уйăхлăх курсне икĕ смена ирттерчĕ. Вăл курссенче 412 председатель вĕренсе тухнă. Çак кунсенчех тепĕр смена вĕренме тытăнать. Унта 250 колхоз председательне вĕрентсе кăларма палăртнă.

Ÿкерчĕк çинче: колхоз председателĕсем занятире. Сылтăмран сулахайалла: Калинино районĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Ф. П. Кулагин, Красноармейски районри «Женщка» колхоз председателĕ И. П Петров, Комсомольски районри «Трактор» колхоз председателĕ Т. И. Иванова тата Красноармейски районри «12 лет Октября» колхоз председателĕ А. А. Абросимов юлташсем.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ИНВАЛИЧĔСЕМ ĔÇРЕ

Тăван çĕршыва хÿтĕлесе инвалид пулса юлнă çынсем колхозсенче бригадирсем, счетоводсем, агротехниксем пулса ĕçлеççĕ. Шупашкар районĕнче Отечественнăй аслă вăрçăн инваличĕсем—пурĕ 35 çын—колхоз председателĕнче ĕçлеççĕ.

ТИСКЕР КАЙĂКСЕМ ТЫТАÇÇĔ

Сĕнтĕр районĕнчи Çĕсмер ялĕнче пурăнакан 19 çулхи Аркадий Осетров, 10 çул хи Дмитрий Михайлов вăрман хуралçипе пĕрле вăрманта упа çывăрнине сăнанă. Вĕсем икĕ пăшалпа персе çак упана тытнă. Унсăр пуçне çамрăк супарçă Осетров юлташ кăçал кашкăр ами тытнă, тирне «Заготживсырье» конторине панă. Унщан ăна пĕр сурăх панă тата государствăна обязательство тăрăх аш-какай памалли парăмран хăтарнă. Осетров юлташ тилĕсем, мулкачсем те нумай тытнă.

Çавăн пекех Чуракасси ялĕнчи Отечественнăй аслă вăрçăн инваличĕ П. Хромов та кăçал икĕ кашкăр тата пĕр тилĕ тытнă. Сунарçăсем тискер кайăксен тирĕсене «Заготживсырье» складне панă.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН. ЕМ: редакторăн — 1—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—22.

НТ 00525 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000